# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаҫачĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

61 (8827) № * Шăматкун, 2020 ҫулхи ҫурла (август) уйăхĕн 15-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Ĕҫлĕ ҫул ҫӳрев

## Олег Николаев – Муркаш тăрăхĕнче



Республикăра

## Виҫĕ кун сасăлăпăр

**Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссийĕн членĕсем августăн 13-мĕшĕнче иртнĕ ларура Чăваш Республикин Пуҫлăхĕн суйлавне тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен депутачĕсен суйлавне irттерессин йышăнăвне ҫирĕплетнĕ. Чăваш Ен ЦИК-ĕн членĕсен ларăвĕ видеоҫыхăну мелĕпе иртнĕ. Ҫак йышăнупа килĕшӳллĕн суйлавсем 3 кун иртеҫҫĕ: сентябрĕн 11 тата 12-мĕшĕсем – маларахри суйлав кунĕсем, 13-мĕшĕ – тĕп суйлав кунĕ.**

Чăваш Ен ЦИК ертӳҫи А. Цветков палăртнă тăрăх, ҫак йышăнăва республика ҫыннисене коронавирус инфекцийĕн пандемийĕнчен сыхлас тесе тунă.

## Кĕҫĕннисене тӳлевсĕр апатлантараҫҫĕ



*Августăн 13-мĕшĕнче района Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев ĕçлĕ çӳл çӳревпе килчĕ. Тĕл пулусене Чăваш Республикин Гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ыйтăвĕсемпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн ертӳçи Вениамин Петров, район пуçлăхĕ – депутатсен район Пухăвĕн ертӳçи Игорь Николаев, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ертӳçин çумĕ – Патшалăх строительствипе ырăнти хăй тытăмлăх, регламентпа депутат этикин комитечĕн ертӳçи Александр Федотов, Муркаш районĕн ентешлĕх ертӳçи Владимир Тяпкин тата ыттисем хутшăнчĕç. Ĕçлĕ тĕл пулусем Мăн Сĕнтĕр ял библиотекинче, Юнкăри «Агрико» предприятире, Юнкă шкулĕнче иртрĕç.*

Республика ертӳçи Олег Николаев чи малтанах Мăн Сĕнтĕр библиотекин ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕ. Ку учреждение «Культура» наци проекчĕн «Культурная среда» регион проекчĕ шайĕнче хăт кĕртнĕ, федераци пулăшăвĕпе модель библиотеки йĕркеленĕ. Хăтлăх ĕçĕ иртнĕ çул пуçланнă. Малтанах район бюджетĕнчен уйăрнă 500 пин ытла тенкĕпе (кăçал район тата 200 пин тенкĕ уйăрнă) юсав ĕçĕсене туса ирттернĕ. Хыççăн федераци конкурсне хутшăнса çĕнтерӳçĕсен йышне кĕнĕ. Çапла модель библиотекине хăт кĕртме федераци бюджетĕнчен 5 миллион тенкĕ уйăрса pană.

Централизациленĕ библиотека системин ертӳçи Ирина Николаева кашни залпа тĕплĕн паллаштарчĕ. Чи малтанах «Хавхалану» курав залĕнче пулса курма май килчĕ. Кунта вулавçăсем периодика изданийĕсемпе паллашĕç. Библиотекăна 20 тĕрлĕ хаçат-журнал килсе тăрать. Çавăн пекех ырăнти çынсен сăн ӳкерчĕкĕсемпе, ӳкерчĕксен пуххипе, ăсталăх ĕçĕсемпе паллашма пулать. Информаци стенчĕ те библиотека ĕç-хĕлне кăна мар, ырăнти, ун тулашĕнчи пурнăçа çутатать.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)

**Республикăра**

# Ял хуçалăхĕ ыйтнине кура

***Çурла уйăхĕн 13-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев ял хуçалăхĕнчи пĕчĕк тата вăтам предпринимательство представителĕсемпе, район администрацийĕсен пуçлăхĕсен АПК ыйтăвĕсемпе ĕçлекен заместителĕсемпе тĕл пулу ирттернĕ.***

**Калаçу ял хуçалăх кооперацийĕ тата фермер юхăмĕ пирки пынă.**

– Ăнăçуллă тата конкуренцие чăтăмлă пулма пирĕн пĕр йыша пĕрлешмелле. Çакна валли кооперации формисем, кластер йĕркелĕвĕсем т. ыт. те пур. Ăна тĕпе хурса рынок ыйтакан конкурентлă продукци кăларма пулать. Çакă экологи тĕлĕшĕпе таса продукци кăларма май парать. Хамăр брендсене регистрацилесен çĕç эпир рынокра тĕплĕн çирĕпленĕпĕр, – палăртнă Олег Николаев.

Ялта аграри секторне интенсивлă аталантарма, патшалăх пулăшăвĕпе туллин тивĕçтерме Олег Николаев пуçарăвĕпе кăçал нумай тĕллев палăртнă.

Регион ертӳçи АПК ыйтăвĕсемпе çĕр ĕçченне пулăшу парассине малалла аталантармаллине палăртнă. «Вĕсем çĕр ĕçченĕшĕн эффективлă пулччăр тесе эпир пулăшу енĕсене пăхса тухма хатĕр», – тенĕ вăл.

Олег Николаев хăйĕн сăмахĕнче республика правительстви фермер аталанăвне иккĕмĕш ырăна хăварманнине палăртнă. Пĕчĕк фермер хуçалăхĕсен ырă енĕ – вĕсем рынокри çĕнĕлĕхсене хăвăрт алла илме пултарни. «Мал туртăмлă аталанас тесен, пирĕн çĕнĕлĕхсенчен юлма юрамасть. Хамăр продукцие экспорта кăларма та вĕренмелле», – тенĕ регион ертӳçи.

ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн заместителĕ – ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов фермер аталанăвне патшалăх пулăшăвĕ парассин йĕркипе паллаштарнă.

Ялта тĕпленнĕ предпринимательсемпе фермерсене пулăшма çĕнĕ структура йĕркеленĕ – «Чăваш Республикинчи предпринимательсен прависене хӳтĕлессипе, предпринимательство активлăхĕпе тата инвестици аталанăвĕпе ĕçлекен координаци канашĕ» тăвасси пирки калакан указа Олег Николаев çурла уйăхĕн 12-мĕшĕнче алă пуснă.

**Хамăр инф.**

**Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса Чăваш Республикинчи шкулсенчи 1 – 4 классенче вĕренекен ачасене кунне пĕр хутчен вĕри çимĕçпе апатлантарассине йĕркелеççĕ. Çак ӳсĕмри ачасем валли тĕрлĕ тата усăллă çимĕçрен тăракан икĕ эрнелĕх меню тăваççĕ, тĕпре çимĕç усăлăхĕ пулĕ. Çимĕçе технологи карттине тĕпе хурса хатĕрлĕç, тĕп блюдăн рецептурипе технологине палăртĕç.**

Çимĕç пахалăхне учредитель тата ашшĕ-амăшĕн комитечĕ пăхса тăрĕ. Çакă ашшĕ-амăш общественине çимĕç пахалăхне пĕлсе тăма тата ыйтусем пулсан ун пирки пĕлтерме май парать.

**Чăвашинформ ИА.**

**Вырма – 2020**

# Тухăç пĕчĕк мар

Районти çĕр ĕçченĕ ĕнерхи куна вырма лаптăкĕн 29,4 процентне (4122 гектар) пуçтарса кĕртнĕ. Пĕтĕмпе 14137 тонна тырă çапса илнĕ. Гектар пуçне тивекен вăтам тухăç – 34,3 центнер.

Кĕр аки валли пурĕ 4349 гектар (планпа – 7053 гектар) çĕр хатĕрленĕ.

**А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

**Сырăнтару – 2021**

# Район хаçатне çитес çул валли çырăнтарăççĕ

**Хисеплĕ вулакансем! «Сĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çитес çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтарăççĕ. Хакĕ – 464 тенкĕ те 88 пус.**

**Хаçат çырăнма кăмăл пулсан, почтальонсене пĕлтерме тăрăшăр. Вĕсем вара сирĕн пата пырсах çырăнтарĕç.**

**Редакци.**

Ĕçлĕ çул çӳрев

# Олег Николаев – Муркаш тăрăхĕнче



(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Интеллект центрта та ăс-тăна тĕрĕслеме тата çивĕчлетме пĕтĕм услови пур, вăхăта пĕччен кăна мар, çемьепе те кăсăклăн ирттерме пулать. Кунта ача-пăча валли уйрăм кĕтес пур, интерактивлă сĕтел акăлчан чĕлхине вĕрентет, çул-йĕр правилипе паллаштарать тата ытти те. Пĕтĕмĕшле илсен вара çĕнĕ компьютерсем, нумай функциллĕ хатĕр, проекторсемпе экрансем, ноутбук, сасă системи, фотоаппарат, планшетсем, микроскоп, флипчарт, интерактивлă сĕтел библиотекăна çӳрекенсемшĕн питех те меллĕ тер тата финанс пĕлĕвне ӳстерĕç.

Олег Николаев палăртнă тăрăх, çĕнĕ йышши библиотека тĕрлĕ ăрури çыншăн кăсăклă пулĕ. Вăл чăвашлăх çине ытларах тимлĕх уйăрма, чăвашла кĕнекесене фонда ытларах кĕртме сĕнчĕ. Унти пĕтĕмĕшле фондра чăваш кĕнекисем 40 процент йышăнаççĕ.

Черетлĕ тĕл пулу Юнкă ял тăрăхĕнчи «Агрико» предприятире иртрĕ. Предприяти ĕçĕпе унăн ертӳçи Валерий Глушаков паллаштарчĕ. Коллектив 16 çынран тăрать. Вăл каланă тăрăх, производствăна аталантарса пыраççĕ, султалăк тăр-кăмпа экологи енчен таса, витаминсемпе пуян çимĕç шутланать. Çавăнпа та суту-илӳ точкисене ытларах та ытларах продукци кирли куçкĕрет.

Унта пысăк технологиллĕ оборудовани вырнаçтарнă. Компьютер программи пӳлĕмсенчи микроклимата шайлаштарса тăрать. Кăмпа ӳстересси ăшă тата энерги перекетлеме май паракан технологипе пулса пырать. Малтан пĕр уйăхра 7,5 пин кубла метр газ тăкакланă пулсан, Германи оборудованине вырнаçтарни тăкака иккĕ е ытларах хут пĕчĕклетме май панă.

Олег Николаев районта предпринимательство сфери аталаннипе кăмăллă пулчĕ, бизнеса пулăшмалли мелсем çинче чарăнчĕ, хушма ĕç вырăнĕсем туса пани вырăнти халăхшăн лайăххине палăртрĕ.

– Муркаш районĕ – хула çумĕнчи район. Унта экономика, мĕнпур отрасль яланах çирĕп аталанса пырать. Çакна паян та курма май килчĕ. Районта çĕнĕ предприятисем аталанни савăнтарать, вĕсен аталану тĕллевĕсем пур. Ун пек проектсене Чăваш Ен Ял хуçалăх министерствипе, район администрацийĕпе пĕрле малашне те пулăшма тăрăшăпăр, – палăртрĕ хăйĕн шухăшне Олег Николаев предприятире пулнă хыççăн.

Черетлĕ тĕл пулу Юнкă шкулĕнче иртрĕ. Республика ертӳçи районта çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленесси епле пынипе кăсăкланчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев каланă тăрăх, пĕтĕмĕшле илсен шкулсемпе ача сачĕсем сентябрĕн 1-мĕшне хатĕр. Хатĕрленӳ ĕçĕ валли пĕтĕмпе 38 миллион тенкĕ укçа уйăрнă, çавăн пекех шкул ачисене турттарма района 3 автобус панă.

Район прокуратуринчен

# Кантăк умне тăнă та...

Августăн 9-мĕшĕнче РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайне Шупашкар хулинчи РДКБ-ран шăнкăрав килнĕ, кĕçĕн çулхи ача иккĕмĕш хутран ӳксе суранланнине пĕлтернĕ.

Факт тăрăх çапла çирĕплетнĕ. Хулара пурăнакан ашшĕ тата çак кĕçĕн çулхи ача яла тăванĕ патне килнĕ. Ашшĕ каланă тăрăх, ачана апатлантарас тесе апатлану пӳлĕмне кайнă. Унти сĕтел-пукан кантăк çывăхĕнче пулнă. Ача пукан çине, унтан – сĕтел çине, хыççăн кантăк сулли çине улăхнă. Пĕчĕкскер аллисемпе кантăк сетки çине таяннă. Паллах, сетка ача йывăрăшне чăтайман. Ача сеткăпа пĕрле иккĕмĕш хутран тулалла тухса ӳкнĕ. Ăна травматологи уйрăмне илсе çитернĕ. Ашшĕ каланă тăрăх, çакăн пек пулса тухасса кĕтмен, шутламан, йăлтах хăвăрт пулса иртнĕ пирки ачана тытса ĕлкĕреймен иккен.

Ача йĕркеллĕ çемьере ӳсет, çемье хăтлă хваттерте пурăнать, çемье тĕлĕшпе унччен ӳпкев пулман, учетра тăмасть. Çак факт тĕлĕшпе район прокуратури тĕрĕслев ирттерет.

Район прокуратури уйрăмах ачасемпе тимлĕ пулмаллине тепĕр хут аса илтерет. Пӳлĕме уçăлтармалли кантăк сеткине çӳхе япаларан кăна тунăран питех те ултавлă, вĕсем йывăрăша чăтаймаççĕ. Ачасене нихăçан та асăрхавсăр ан хăварăр. Кантăксене хупă тытса усрăр, пӳлĕме уçăлтарма вара çӳл енчи ятарлă режимпа усă курăр. Кантăк çинче фиксаторпа усă курни ачана кантăка уçма май памĕ. Кантăк умĕнчи сĕтел-пукана аяккалла куçарма ан манăр.

**Ю. СЕМЕНОВ,**
**район прокурорĕн çумĕ.**

Сывлăх

пулĕç. Кунта «Наци электрон библиотеки» патшалăх информаци системипе усă курма пулать.

Библиотека специалисчĕсем экологи енĕпе тĕрлĕ мероприяти ирттерме палăртаççĕ, «Юный эколог» клуб ĕçлет. Унта çӳрекенсемпе пĕрле цифра микроскопĕпе усă курса тĕрлĕ опытпа тĕпчев ĕçĕ ирттерме май пулĕ. Çавăн пекех экологи тата ăс-тăна çивĕчлетекен ытти вăйă ирттерме палăртаççĕ. Мероприятисене электрон презентаци, фото- тата видеоматериалсем, слайд-экскурсисем çутатĕç. Информаци центрĕнче 5 компьютер вырăнĕ йĕркеленĕ, библиотекăна пысăк хăвăртлăхлă Интернет çыхăнăвĕпе тивĕçтернĕ. «Пĕр чӳречe» пулăшăвĕ çынсене патшалăх тата муниципалитет услугисемпе усă курма май парать, çавăн пекех кунта компьютерпа уйрăмах ĕçлеме пĕлменнисене пулăшаççĕ.

шшĕпе уплюнкка тата каска кăмпи ӳстереççĕ. 2014 çулта пĕрремĕш виçĕ цех хута янă. Хальхи вăхăтра вĕсем вуннă.

Çитес вăхăтра субстрат валли уйрăм цех тăвас шухăшлă. Предприяти территорийĕ сарăлса пырать, нумаях пулмасть кӳршĕри ферма çуртне туяннă. Унччен предприятин тĕп вырăнĕ Шупашкар районĕнче пулнă пулсан, халĕ вăл Муркаш тăрăхĕнче вырнаçнă. Малтанхи вăхăтсенче кашни камерăран каска кăмпи талăкра 100-шер килограмм пуçтарнă, уйăхра 8 тоннăна яхăн пухăннă. Халĕ уйăхсерен 25 тонна хатĕр продукци сутлăха ăсатаççĕ.

Предприятире продукци туса илесси – çуллĕ шайра. Хатĕр продукцие 300 грамлă чĕркемсем туса çĕршыври суту-илӳ точкисене ăсатаççĕ. Предприятире ӳсекен

Олег Николаев район активĕпе, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе тĕл пулчĕ. Республика ертӳçи вĕсемпе яллă территорисене валли пулăшу мерисем уйăрнине, укçа-тенкĕпе епле усă курнине сӳтсе яврĕ. Вăл пуçлăхсене республика тата федераци программисене ытларах хутшăнма, проектсене маларах хатĕрлеме, укçа-тенкĕпе усă курма заявкăсене вăхăтра тăратма сĕнчĕ. Пулăшу мерисен эффективлăхне ӳстерес тĕлĕшпе çынсен шухăш-кăмăлне шута илме хатĕррине палăртрĕ.

Тĕл пулура çавăн пекех пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе ĕçлессин, шыв башнисен капиталлă юсавĕн, картиш территорийĕсене хăт кĕртессин малашнехи программисене сӳтсе яврĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Суйлав

# 19 вырăна – 59 кандидат

## *«Единая Россия» парти сĕннĕ 19 кандидата регистрациленĕ*

**Пĕлетпĕр, пĕрлехи сасăлав кунĕнче – сентябрĕн 13-мĕшĕнче – суйлавçăсен Чăваш Республикин Пуçлăхне суйланипе пĕрлех депутатсен район Пухăвĕн депутачĕсене тата депутатсен ял тăрăхĕсенчи Пухăвĕсен депутачĕсене те суйламалла пулать. Сасăлав виçĕ кун – сентябрĕн 11 – 13-мĕшĕсенче иртет. Унччен 25 округпа район шайĕнчи депутатсене 25 çынна суйланă пулсан, район Уставне улшăнусем кĕртнĕ май, округсен шутне 19 хăварнă. Çавна май депутатсене те 19 çынна суйламалла пулать.**

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – Муркаш территори суйлав комиссийĕн председателĕ Лилия Тарасова каласа панă тăрăх, депутат пулас текен кандидатсене регистрацилеме документсене территори суйлав комиссине çитерсе памалли тапхăр августăн 3-мĕшĕччен пынă. Августăн 13-мĕшĕнче кандидатсене регистрацилеме уйăрнă тапхăр вĕçленнĕ.

Çапла вара депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутатне суйлама 59 кандидата регистрациленĕ. Сахалах мар, пĕр вырăна 3 çын ытла тивет. Кандидатсем «Единая Россия» партирен – 19 çын, «Справедливая Россия» партирен – 15 çын, КПРФ-ран – 7 çын, ЛДПР-тан – 1 çын, çавăн пекех хăйсен кандидатурисене хăйсем сĕннисем – 17 çын.

Депутатсен Муркаш район Пухăвне депутата суйлама **«Единая Россия» партирен** округсем тăрăх çак кандидатсене (алфавит йĕркипе вырнаçтарнă) регистрациленĕ:

1. Борис Васильевич Андреев (12-мĕш Турай);
2. Михаил Ананьевич Бычков (6-мĕш Ильинка);
3. Наталия Вячеславовна Герасимова (17-мĕш Йӳçкасси);
4. Галина Георгиевна Голубева (9-мĕш Москакасси);
5. Николай Ефимович Григорьев (5-мĕш Мăн Сĕнтĕр);
6. Алексей Николаевич Дмитриев (19-мĕш Ярославка);
7. Рудольф Германович Замятин (8-мĕш Калайкасси);
8. Николай Алексеевич Кожевников (11-мĕш Çатракасси);
9. Игорь Васильевич Николаев (3-мĕш Вăскасси);
10. Сергей Валерьевич Попов (2-мĕш Чапаевски, Муркаш);
11. Алексей Георгиевич Прокопьев (10-мĕш Оринин);
12. Вячеслав Александрович Прокопьев (4-мĕш Мăн Хураçка);
13. Александр Александрович Сидюшкин (13-мĕш Хорнуй);
14. Александра Александровна Скворцова (18-мĕш Ярапайкасси);
15. Игорь Аркадьевич Смирнов (15-мĕш Шетмĕпуç);
16. Алексей Анатольевич Углев (1-мĕш Октябрьски, Муркаш);
17. Владимир Артурович Федоров (14-мĕш Чуманкасси);
18. Владимир Геннадьевич Федоров (16-мĕш Юнкă);
19. Николай Николаевич Юлин (7-мĕш Катькас).

**Хушса калани.** Муркаш территори суйлав комиссийĕ регистрациленĕ ытти кандидатпа – партисен представителĕсемпе тата хăйсен кандидатурисене хăйсем сĕннисемпе – хаçатăн çитес номерĕсенче паллаштаратпăр.

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

# Ача савăнăç кӳрет

**Çемьере ача çурални – яланах пысăк савăнăç, телей. Ача çуралнă хыççăн ӳссе, вĕренсе, аталанса пĕр-пĕр паллă композитор е ăсчах, спортсмен е конструктор пулса тăрать. Ку та ытла пысăк пĕлтерĕшлĕ мар – кирек мĕнле професси суйласан та вăл пурнăçра хăйĕн ашшĕ-амăшне савăнăç кӳрет.**

Тепĕр çынна кун çути пама çут çанталăк хĕрарăма кăна пӳрнĕ. Çапах та хĕрарăма та ача пуласси пирки пĕлтерни савăнăç кӳмест пулсан вара? Çакăн пек вăхăтра пулас ача амăшне сывлăх сыхлав саккунĕпе килĕшӳллĕн «шăплăх эрнипе» тивĕçтермеллине пăхса хунă. Çак вăхăтра ăна пулăшу, вырăнлă канаш кирлĕ, мĕншĕн тесен кĕтмен лару-тăрăва вăл пур енлĕн тĕрĕс хаклаймасан та пултарать. Ытларах чухне хĕрарăмсем чĕри айĕнче çыннăн пурнăçĕ аталанма тытăннине ăнланаççĕ – унран хăтăлмаççĕ.

Хăтăлнисем вара кайран пурнăç тăршшĕпех çак пулăма аса илеççĕ. Ку утăма вĕсем упăшкине е сывăх çыннисене итленипе тăваççĕ. Теприсем тепĕр вăхăт хăйсемшĕн пурăнасшăн, ĕçре çитĕнӳсем тăвасшăн.

Çакăн пек йывăр йышăну туни, йывăр аса илӳсем чуна ан ыраттарччăр тесен, арлă-арăмлă пурнăçра та асăрханулăх пирки манмалла мар. Çапла çеç хĕрарăмăн сывлăхĕ, ачан пурнăçĕ умне хăрушлăх тухса тăмĕ. Паллах, çĕмăл пулмĕ, анчах та пулас ача амăшĕн те сывăх çыннисене хăйĕн савăнăçне хуçма памалла мар. Çемьере ача пурри пысăк телей пулнине каласа ӳкĕте кĕртме пултарсан лайăх, мĕншĕн тесен ачан пурнăçĕ пуçланнă хыççăн тăвагă эрнерен унăн чĕри тапма пуçлать, улттăмĕш эрнере мими ĕçлеме тытăнать, саккăрмĕш эрнере ача хусканусем тума пуçлать, вун икĕ эрне тĕлне унăн пур органĕ те йĕркеленсе çитет.

Пулас ашшĕ хĕрарăма ăнланни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа та ача çуратас ыйту пирки те маларах тĕплĕн калаçмалла.

**Л. ЯРДЫКОВА,**
**Муркаш район тĕп больницин психологĕ.**